Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – www.rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Давыдов-Анатри Василий Иванович**
**Книга: Ӳссен эсӗ кам пулан?**
**Сказка: Улӑм, Хӑмпӑ, Ҫӑпата**

Пурӑннӑ тет пӗр ялта
Улӑм, Хӑмпӑ, Ҫӑпата.
Пӗрре, ешӗл ҫуркунне,
Вӗсем кайнӑ сертене.
Пырсан-пырсан ҫул ҫинче
Курчӗҫ: улӑх хӗрринче
Ҫырма юхать шавласа,
Сар хӗвелпе ҫуталса.
Мӗскер ӗнтӗ тумалла,
Мӗнле каҫса каймалла?
– Ларт пире эс ху ҫине,
Илсе каҫар леш енне, –
Хӑмпӑна пур кӑмӑлтан
Сӑмах хушрӗ Ҫӑпата.
Хӑмпӑ пӑхрӗ ун ҫине,
Туйрӗ йывӑр пуласса.
Ҫавӑнпа хӑй сӑмахне
Вӑл пуҫларӗ тӑстарса:
– Эп черченкӗ те ҫӳхе,
Пултараймӑп хальлӗхе.
Ҫил вӗрсессӗн вӗҫсе кайӑп,
Манах тӑвӑр кайран айӑп.
Хывӑр каҫӑ Улӑмран,
Вӑл маттур ҫӗр хут манран.
Улӑм сӑлтав шырамасть,
Ӗҫрен тарма шутламасть:
Пулать каҫӑ, ҫул уҫать,
Уншӑн хӑй те савӑнать.
Ҫырма урлӑ чи малтан
Каҫма тивет Ҫӑпатан.
Ҫинҫе Улӑм чӑтаймасть,
Вӑйӗ ҫук ун, йӑтаймасть,
Хуҫӑлать вӑл хӑвӑртах –
Шыва чӑмать Ҫӑпата.
Кулать Хӑмпӑ лӑхлатса,
Ик аллине шарт! ҫапса.
Кулнӑ май тулса пырать,
Сывлӑшпа хӑй чыхӑнать.
Ахӑлтатрӗ-ахӑлтатрӗ,

Пычĕ-пычĕ карăнса,
Тӳсеймерĕ-çке, çатлатрĕ
Çитмĕл чĕлпĕклĕ пулса!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.